Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

79 (8145) № ✻ Юн кун, 2013 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 23-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ялта пурăнакансен сывлăхĕшĕн

***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Галина Гордеева 2006 çултанпа Уйкас Янасалти пĕтĕмĕшле врач практикин офисне ертсе пырать. Пуян ĕç стажлĕ сывлăх хуралçи çак тапхăрта асăннă ял тăрăхĕнче тата çывăх ялсенче пурăнакансен сывлăхĕшĕн пысăк ĕç туса ирттерет.***

***– Ял çыннин пĕрлешӳллĕ хуçалăхне çĕклемелле, килти хушма хуçалăха аталантармалла. Пирĕн тивĕç вара вĕсен сывлăхне пăхса тăрасси пулса тăрать. Çиччĕ виçсе пăхсан, пурсăмăр та пĕр ĕç тăватпăр: çĕр-шыв экономикине тĕреклететпĕр, – терĕ черетлĕ пациента йышăнма хатĕрленекен Галина Иосифовна.***

***Çар ĕçченне качча тухнă пирĕн ентеш медицина пĕлĕвне 1980 çулта Киевра илнĕ. Унтанпа пĕр кун сиктермесĕр – сывлăх хуралĕнче.***

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Пĕтĕмĕшле врач практикин офисĕсенче



Фермăсенче

## Камăн сăвăм пысăкрах?

***Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче юпа уйăхĕн 18-мĕшĕнче пĕр ĕне пуçне вăтам сăвăм мĕнле пулнине кăтартни (килогрампа).***

| | |
|---|---|
| Суворов яч. хис. | 13,7 |
| Е. Андреев яч. хис. | 12,5 |
| Ильич яч. хис. | 11,9 |
| Чкалов яч. хис. | 10,7 |
| «Путь Ильича» | 10,5 |
| «Герой» | 10,0 |
| «Оринино» | 8,3 |
| «Колос» АПФ | 8,0 |
| «Свобода» | 6,4 |
| «Восток» | 6,2 |
| «Ударник» | 5,8 |
| Чапаев яч. хис. | 4,4 |
| «Передовик» | 4,2 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **9,0** |

**ХУШСА КАЛАНИ.** Обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче вăй хуракансемшĕн йывăр хĕл кунĕсем пуçланчĕç. Çакă вăтам сăвăм кăтартăвĕнчен аван курăнать. Апла пулин те пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем хĕл валли апат ытлă-çитлĕ янтăланине кура сăвăма чакармасса шанас килет.

Ĕнесен йышĕ хушăннине кура районти ял хуçалăх производство кооперативĕсем асăннă талăкра пĕтĕмпе 19657 килограмм сĕт сунă. Ку вăл иртнĕ çулхинчен 748 килограмм нумайрах.

Ĕнесен кĕтĕвне «Путь Ильича» агрофирмăра, Суворов яч. хис хуçалăхра хушнă.

Пенси фондĕнче

## «Телей çырăвĕсем» – заявленипе

2013 çултан тытăнса граждансене харпăр хăйĕн лицевой счечĕ пирки пĕлтерсе тăрассин йĕрки улшăнчĕ. Халĕ вара çыннăн пулас пенсийĕ валли ĕç паракан мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ куçарни, пенси валли пухăнакан укçа-тенкĕне ертсе пыракан мĕнле компани инвестицилени тата унăн тупăшĕ пирки çулталăкне пĕр хутчен гражданин хăй ыйтнипе кăна официаллă майпа пĕлтерĕç.

Кунта тĕрлĕ майсемпе усă курма май пур. Чи мелли вăл – информацие патшалăх тата муниципалитет услугисен пĕрлехи порталĕпе (www.gosuslugi.ru) усă курса илесси. Унта Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕн пайĕ пур.

Çавăнпа пĕрлех хăвăра интереслентерекен информацие «Раççей Перекет банкĕнче», «Уралсиб Банкра», «Газпромбанкра», «Мускав Банкĕнче», «ВТБ Банкра» та ыйтса илме пултаратăр. Асăннă банксен ку тĕлĕшпе Пенси фончĕпе килĕшӳ пур.

Кунсăр пуçне хăнăхнă йăлапа лицевой счет пирки пĕлтернине почта урлă заказлă çырупа илес тетĕр пулсан, РФ Пенси фончĕн управленине пырса заявлени çырас пулать. Енчен те сире ĕç паракан пĕтĕм ĕç тапхăрĕнче мĕн чухлĕ страховани взносĕ тӳлени интереслентерет пулсан, ку информаципе Пенси фончĕн районти управленийĕ тивĕçтерĕ.

**О. АЛЕКСЕЕВА,**
**Пенси фончĕн районти управленийĕн пай пуçлăхĕ.**

## Программăна хутшăнакансем – 1989 çын

Патшалăх пулас пенсисене хушса финанслассин программи пилĕк çула пычĕ. Çак тапхăрта асăннă Программăна хутшăнма кăмăл тунисем районта 1989 çын пулчĕ. Чăваш Республикинче кун пеккисем 203 пин çын, Раççейĕпе пĕтĕмпе 15,8 млн. çын ытла.

Республикăра заявленисенчен ытларахăшне (146,7 пин) патшалăх тытăмне кĕмен пенси фончĕсем урлă йышăннă. 59 пин ытла заявлени Раççей Пенси фончĕн хуласемпе районсенчи территори управленийĕсем йышăннă. Ĕçленĕ вырăнта заявлени паракансем 6,4 пин ытла çын пулнă. Патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕ урлă 375 заявлени йышăннă. Программăна кĕмелли юлашки уйăхра – сентябрь уйăхĕнче – заявленисем уйрăмах нумай йышăннă, 31,6 пин е пĕтĕм заявленисен 15 проценчĕ чухлĕ.

Программăна хутшăнакансенчен ытларахăшĕ 40 çула çитмен çамрăксем – 63 процент. 40 – 60 çултисем 27 процент, 60 çултан аслăраххисем 10 процента яхăн. Хĕрарăмсем ытларах пуçарулăх кăтартнă (62 процент) тата хуласенче пурăнакансем (65 процент).

Программа гражданин пĕрремĕш взнос хывнăранпа 10 çул хушши пырать. 2009 çултан тытăнса Чăваш Республикинче Программăна хутшăнакансем хăйсен пулас пенси виçине ӳстерме взноссем 525 млн. тенкĕ тӳленĕ. Тӳлев вăтам шутпа 6800 тенкĕпе танлашать.

Пенси фончĕ çавăн пирки аса илтерет. Пенсисене хушса финанслассин программине хутшăнса хăйсен ирĕкĕпе çулталăкĕпе хывнă 2000 тенкĕрен тытăнса 12000 тенкĕ таран взноссене патшалăх икĕ хут ӳстерет. Хушса финанслакан тепĕр енĕ ĕç паракан пулма пултарать.

Программа условийĕсемпе взноссене уйăхсерен те, пĕр харăссăн та тӳлеме пулать. Тӳлев суммине ĕçлекен çын бухгалтерийĕ урлă та, çавăн пекех банк карттипе те, банкоматсемпе тӳлев терминалĕсенче укçан та тӳлеме май пур.

Программа участникĕсем пухăннă пенсие ватлăха пула ĕç пенсийĕ е вăхăт тухмасăрах пенси пама пуçăнсан та илме пултараççĕ. 2012 çулта пухăнакан пенсие тӳлеме тытăннă та ĕнтĕ. Заявительсенчен ытларахăшне пухăннă пенсие пĕр харăссăн тӳлесе татнă. Мĕншĕн тесен уйăхсерен тӳлемелли виçе пенсин пĕтĕмĕшле калăпăшĕн 5 процентĕнчен нумайрах пулман.

**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ.**

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Кĕçех çĕнĕ ФАП уçăлĕ

Чăваш Ен Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн указĕпе килĕшӳллĕн республикăра 100 фельдшерпа акушер пункчĕ çĕнĕрен хута каймалла. Çак ырă улшăну çынсен сывлăхне сыхлассинче пысăк вырăн йышăнĕ.

Муркаш районĕнче пурăнакансем те çак указăн ырă витĕмне туйма пултарĕç, унпа килĕшӳллĕн кунта çакăн йышши виçĕ объект хута каймалла. Кĕçех Шомикри пункт халăха йышăнма пуçлĕ, унта халĕ çурта хута ярассин юлашки тапхăрĕ пырать. Ĕнер район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев унта пулса ĕç-хĕлпе тĕплĕнрех паллашрĕ. Чи малтанах Р. Тимофеев Катькас ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Г. Лебедевпа, «СПК «Возрождение» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн генеральнăй директорĕпе А. Резюковпа тĕл пулчĕ. Фельдшерпа акушер пункчĕ ĕçлеме пуçласси пуриншĕн те чылайранпа кĕтнĕ самант, çавăнпа кунта пурăнакансем те активлăхпа палăраççĕ. Ку тăрăхри çынсен йышĕ 600 çынран та иртет. Катькаса çитес пулсан 7– 8 километр каймалла. Çапла вара патшалăх тимлĕхне Шомиксем те аванах туйма пултарĕç.

## 987 çынна ĕçпе тивĕçтернĕ

Çулталăк пуçланнăранпа ĕçпе тивĕçтерекен центра ĕç шыраса 1087 çын пынă. Районта ĕçсĕрлĕх шайĕ 0,28 процентпа танлашать. Пĕтĕмпе 57 çынна ĕçсĕррисен шутне илнĕ. Паянхи кун тĕлне вакансисен хисепĕ 174-пе танлашать. Çулталăк пуçланнăранпа 987 çынна ĕçпе тивĕçтернĕ.

## Юрă-кĕвĕ ăстисем пухăннă

Чăваш Республикин Халăх пултарулăх çуртĕнче семинар канашлу иртнĕ. Унта 2012 – 2013 çулсен тапхăрĕнчи концерт ĕç-хĕлне тишкернĕ, малашнехине çирĕплетнĕ. Пирĕн районтан «Шуçăм», «Шуракăш», «Янаш» халăх ансамблĕсен ертӳçисем хутшăннă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА хатĕрленĕ.**

Йыхрав

## Ял хуçалăх продукцийĕн ярмăрккине чĕнетпĕр

***Октябрĕн 25-мĕшне палăртнă Тыр-пул уявне ноябрĕн 8-мĕшне куçараççĕ.***

***Октябрĕн 25-мĕшĕнче Муркашра Ял хуçалăх продукцийĕн ярмăрkки иртет.***

***Кунта çĕр улмипе тĕрлĕ пахча çимĕç, улма-çырла, аш-какай туянма йыхравлаççĕ. Тĕрлĕ улма-çырла хунавĕ те сутаççĕ. Вĕсене ял хуçалăх предприятийĕсем, фермер хуçалăхĕсем, уйрăм çынсем сĕнеççĕ.***

***Пурте ярмăрккăна васкăр!***

Район 70 çул тултарнă май

## Истори – çамрăксен куçĕпе

Пирĕн район историйĕ питĕ пуян, çавăнпа та унăн кашни страници – хăй тепĕр истори. Муркаш ене хаклакансем, юратакансем, район аталанăвĕн утăмĕсемпе интересленекенсем ытларах чух вырăнти тавра пĕлӳçĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсен ĕçĕсенче районăн несĕлĕ палăрать, малашлăх та курăнать.

Анчах та кирек епле историре те тĕпчесе пĕлменннни пур. Тен, паян пурăнакан аслă ăрури çынсем район историйĕпе çыхăннă, ку таранччен анлă сарăлман фактсем пĕлеççĕ. Тен, районпа çыхăннă паллă ĕçсем çине çамрăксем паян урăхларах хаклавпа пăхаççĕ...

Район 70 çул тултарнине халалласа çамрăк журналистсен конкурсне шăпах çак чăнлăхсене мала хурса йĕркеленĕ. «Муркаш районĕ: çамрăксен куçĕпе» конкурса валли хатĕрленĕ ĕçсене (жанр енĕпе чикĕлемен, текстпа пĕрле сăн ӳкерчĕксем пулнине ырлаççĕ кăна) «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕнче тата район администрацийĕн информаципе тивĕçтерекен пайĕнче йышăнаççĕ.

Октябрьте пуçланнă конкурса февраль уйăхĕнче пĕтĕмлетеççĕ. Мала тухнисене парнесемпе чысласçĕ.

Çырăнтару – 2014

## Çырăнмасăр ан юлăр!

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2014 çулхи январьтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Хаçата 6 уйăха çырăнмалли хак – 216 тенкĕ те 30 пус.**

**Хаклă вулаканăм! Малашне те пĕрле пулар!**

# Пĕчĕк йышпа пысăк ĕç пурнăçлаççĕ



**– Виталий Иосифович, эсир ертсе пыракан хуçалăх ĕçĕпе тăтăшах интересленсе тăнăран сире çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те хирте, выльăх-чĕрлĕх ферминче курма пулать. Апла пулсан хуçалăхри ĕç-хĕле çирĕп тĕрĕслесе тăратăр?**

– Ку ыйту пулчĕ-ши е шахвăртса калани, анчах манăн хуравĕ хатĕр. Хуçалăх ертӳçи е специалист производствăран катара тăрсан, ĕçлекенсемпе вырăна тухса калаçмасан экономикăна малалла уттарасси иккĕленӳллĕ.

Пирĕн усă курмалли çĕрсен пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 2268 гектар. Вăл шутра сухаламалли çĕрсем – 1680 гектар. Çак лаптăксем çулталăк тăршшĕпех пушă е çум курăкĕ айĕнче выртмаççĕ. Апла пулсан пирĕн хуçалăх ĕçченĕсем хăйсене шанса панă çĕрпе туллин усă кураççĕ. Çĕр ĕç культурине малта тытас тĕллевпе çур акирен пуçласа хура кĕркуннеччен пирĕн ĕçченсем хирте. Ӳсĕмлĕ малашлăхпа тухăç никĕсĕ шăпах ĕç культуринчен пуçăннине пирĕн кашни ĕçчен ăнланать. Чăнах та, культура сăмахра эпир ытларах чух ташă-юрă кăна куратпăр, анчах культура вăл ытти çĕрте те кирлĕ çке. Тĕслĕхрен, çĕр ĕçĕнче, выльăх-чĕрлĕх пăхнă çĕрте, строительствăра. Кунта К. Тимирязев сăмахĕсене илсе кăтартас килет. «Çĕр ĕç культури пулмасан, илемлĕ картинăсем те, статуйăсемпе кĕнекесем те обществăна культурăсăрлăхран хӳтĕлеймĕç. Пĕр пучах ӳснĕ çĕрте икĕ пучах ӳсмелле», – тенĕ çĕр ĕç аксакалĕ. Кăçал та çакна тĕпе хурса çур акире ĕçе кӳлĕнтĕмĕр. Çуркуннехи ырă пуçарăвăн тилхепине çу каçипе те, кĕр кунĕсенче те пушатмарăмăр. Çапла вара пирĕн паян обществăлла выльăх-чĕрлĕхе тулăх хĕл каçармалăх апачĕ пур, çитес çул валли акса хăварнă кĕрхи культурăсен лаптăкĕсем анлă, производство районăн вăтам шайĕнчен пысăкрах, ĕç укçипе парăм çукпа пĕрех.

**– Пĕчĕк йышпа пысăк ĕç пурнăçлани çинче чарăнтăр та, кунта тĕплĕнрех палăртмалли, хастарсене асăнмалли те пурах-тăр. Çапла мар-и?**

– Çапла. Ял хуçалăхĕнчи ĕç-хĕл çур акирен пуçланать. Кăçалхи çур акине эпир иртнĕ хĕл кунĕсенчех тĕплĕ хатĕрлентĕмĕр. Тĕрĕсрех каласан çур акири ăнăçулăха иртнĕ кĕр акирех хывса хăвартăмăр. 2012 çулта акса хăварнă 360 гектар кĕрхи тулă çурхи уй-хир ĕçĕсене 350 гектар çинче кĕске вăхăтра пурнăçлама пулăшрĕ. Александр Семенов механизатор çĕр хатĕрлессипе, Михаил Атласкин, Николай Оньков механизаторсем вара ака агрегачĕсемпе, Юрий Михайловпа Виталий Романов водительсем хире вăрлăх кăларассипе, Александр Андреевпа Валерий Скворцов тата Юрий Шушкинпа Вячеслав Пугачев акаçăсем ака технологине пăхăнассипе тăрăшса ĕçлерĕç. Çак ĕçченсемех – В. Скворцов И. Спаскинпа улшăнчĕ çеç – кĕр акире те 400 гектар кĕртрисем вăхăтра акса хăварчĕç. Ака хыççăнхи шалкăм çумăра пула 40 гектара тепĕр хут акма тивни те пĕтĕмĕшле ĕç калăпăшне чакармарĕ.

**– Эсир хуçалăха 7-мĕш çул ертсе пыни пысăк вăхăт мар, анчах эсир çулсеренех çĕр ĕçне çĕнĕ технологисем кĕртетĕр.**

– Паян малта пыракан технологисенчен пăрăнса юлма юрамасть. Çĕннине вăхăтра алла илтĕн – экономикăна тепĕр утăм мала уттартăн. Çак çулпа аталанса юлашки çулсенче эпир те çĕрсене сухалассинчен пăрăнтăмăр. Хирсенчи çĕре çиелтен хатĕрлесе пулăхлă сие упраса хăварассипе тимлетпĕр. Усси пур. Кăçал тырпул тăхăçĕ гектар пуçне районĕпе вăтамран 16,5 центнера яхăн пулчĕ пулсан, пирĕн тухăç – 22,1 центнер. Кĕрхи тулă тухăçĕ гектар пуçне 30,8 центнер пулни кĕртрисемпе ĕçленин уссине кăтартать. Çак «вăрттăнлăх» та çулсем иртнĕ май ума тухрĕ. Çĕр-шывăн ял хуçалăх программисем те ĕçлекен çын валли.

**– Кăçалхи вырмара та эсир тĕрĕс çул суйласа илни тыр-пула çумăрсем пуçланиччен кĕлете кĕртсе хума май пачĕ.**

– Эсир эпир уйрăм çынсен харпăрлăхĕнчи «хир карапĕсемпе» усă курнине калатăр пулас. Вĕсен хуçисемпе эпир вырмаччен маларахах килĕшӳсем турăмăр. Çапла вара П. Толикин «Акрос-530» комбайнпа, С. Петров «Вектор» «хир карапĕпе» тухăçлă ĕçлерĕç. Тырăпулă пухса илнипе пĕрлех çумăрсемччен нумай çул ӳсекен курăксен вăрлăхне те çапса тĕшĕлесе илтĕмĕр.

**– КЗСра ĕçлекенсем тăрăшулăх кăтартни те йĕтем çине çитнĕ тырăна купара нумай вырттарман.**

– Вырма вăхăтĕнче йĕтем çинче пурте пĕр йышра вăй хучĕ: уй-хир бригадинче вăй хуракансем те, ферма ĕçченĕсем те, Çурлатри çамрăкĕсем те. Кунта манăн ытти ĕçченсемпе пĕрлех Владимир Морозов пултарулăхне палăртас килет. Хуçалăхра токарьте тата юсав мастерскойĕн пуçлăхĕнче ĕçлекенскер КЗСа тĕплĕ хатĕрлерĕ. Çавна пулах ĕç çире кунта чăрмав пулмарĕ. Йĕтем çине килнĕ тырăна пĕчченех типĕтсе тăма ĕлкĕрчĕ вăл. Вырма хыççăн тырă типĕтмелли комплекса çитес çул валли хатĕрлесе хучĕ.

Пирĕн ĕçченсем ыранхи куна пăхса ĕçленипех хуçалăх кăçал 1517 тонна утă, 500 тонна ытла сенаж хатĕрлеме мехел çитерчĕ. Иртнĕ çулхи сенаж та 1000 тонна ытла пурри, тырă çителĕкли пире хуçалăхри условнăй кашни выльăх пуçне 149,6 центнер апат единици хатĕрлеме май пачĕ. Çапла вара пирĕн паян выльăх апачĕ сутмалăх та пур.

«Çакă пулать те ĕнтĕ вăл рынок хутшăнăвĕсенчи ĕç-хĕл», – пĕтĕмлетрĕм эпĕ хамăр калаçăва.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

### Район 70 çул тултарнă май

***Районăмăр историне тишкерме тăрсан кирек хăçан та Социализмла Ĕç Геройĕ Евтихий Андреевич Андреев ячĕ чĕлхе çине килет. Аслăрах ăрури çынсем ăна Муркашсен председателĕ тесе аса илеççĕ. Çакăн пек хаклавпа иртнĕ ĕмĕрĕн 50–60-мĕш çулĕсенче çуралнисем те калаçу «Знамя труда» колхоз ертӳçи пулнă Евтихий Андреевич Андреев пирки пынине ăнланса илеççĕ. Çĕр ĕç паттăрĕ пурнăçран уйрăлсан вăл 1951 – 1981 çулсенче ертсе пынă хуçалăха унăн ячĕпе хисепleме пуçларĕç. Çакă паянхи ĕçченсене те кулленхи ĕçсене çанă тавăрса пурнăçлама ыйтать. «Урăхла майĕ те çук», – терĕ хамăрăн калаçу пуçламăшĕнче Е. Андреев яч. хис. кооператив ертӳçи В. СЕМЕНОВ.***



*В. Морозов – токарь те, юсав мастерскойĕн пуçлăхĕ те, вырма паттăрĕ те.*



*М. Атласкин механизатор хуçалăхра 1978 çултанпа.*

# Ӳсĕмрен ӳсĕм патне

### Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче



Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн Çатракассинчи сĕт фермин коллективĕ юлашки çулсенче тăтăшах çулталăкри ĕç кăтартăвĕсемпе "Чи лайăх сĕт ферми" вымпела тивĕçрĕ.Валентина Макарова ертсе пыракан ферма коллективĕ кăçалхи 9 уйăхра пĕр ĕне пуçне вăтамран 4 пин ытла килограмм сĕт сунă. Çакăн никĕсĕнче – ферма ĕçченĕсен тăрăшулăхĕпе уй-хирте ĕçлекенсен çаврăнăçулăхĕ. Вăхăтра тата пахалăхлă янтăланă апат продуктивлăха ӳстермелли тĕп çул пулнине хуçалăхра кашниех ăнланать.

Паянхи сăн ӳкерчĕкре **(сулахайран сылтăмалла)** эсир асăннă фермăри Надежда Михайлова сĕт сăвакана, Татьяна Васильева техник-осеменатора, Фаина Антонова сĕт сăвакана куратăр. Хуçалăх экономикин аталанăвĕнче кашнийĕнех тӳпи пысăк. 9 уйăх хушшинче Надежда Валентиновна хăйĕн ушкăнĕнчи кашни ĕнерен 4646 килограмм, Фаина Юрьевна 4401 килограмм сĕт сума пултарнă. Татьяна Геннадьевна тăрăшнипе вара çак вăхăтра 100 ĕне пуçне 56 пăру илнĕ пулсан, çулталăк вĕçлениччен ку кăтартăва 85 пăрăва çитерес тĕллевлĕ.

– Хĕл тапхăрне кĕнĕ май çу каça хатĕрленĕ апатăн кашни килограмĕпе тулăх усă курма тăрăшатпăр. Çакă ĕнтĕ вăл ӳсĕмсен никĕсĕ. Каялла утăм пире валли мар, – терĕç ферма ĕçченĕсем.

Маттур хĕрарăмсем тăрăшуллă ĕçре телей тупни мана савăнтарчĕ кăна.

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

### Тăрăшуллисем

# Мал ĕмĕтлĕ



*Тĕллевсене лайăх палăртса тăрăшса тимлекен мал ĕмĕтпе пурăнать. Ку лайăх та. Мĕншĕн тесен вĕсенчен ыттисем тĕслĕх илме пултараççĕ. Илеççĕ те.*

*Районта тырă-пулă тата çĕр улми туса илессипе ĕçлекенсем хушшинче чуна парса вăй хуракансем сахал мар. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Юрий Терентьев механизатор – вĕсенчен пĕри. Çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те тăрăшуллăскер валли «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра ĕç пур. Кăçалхи кĕр кунĕсем çумăрлă пулчĕç пулин те, Юрий Владиславовичăн «хурçă учĕ» ĕçсĕр лармарĕ. Юлашки кунсенче вăл хиртен çĕр улми турттарассипе тăрăшрĕ.*

**А. ПЕТРОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Юратнă ĕçе чунĕпе парăннă

Утарçăсем



***Ял хуçалăхĕнче кашни ĕçĕн вăхăчĕ тата майĕ пур. Хурт-хăмăр ĕрчетесси пирки те çавнах каламалла. Вĕлле хурчĕ ĕçчен те сăпайлă çынна юратать. Унăн аллинче вăл ăнать, йышланать, çултан-çул ытларах продукци парать. Районта вĕлле хурчĕпе ĕçлекенсем – шăпах çак карта ларакан çынсем. Вĕсем хăйсен ĕçчен тусĕсемпе пĕр чĕлхе тупнă темелле ĕнтĕ. Çавăнпах ĕçри ӳсĕмĕсем те сумлă, анчах пушă вăхăтне хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçе халалланăскерсем хăйсен тăрăшуллăхĕ пирки ытлах сăмахламаççĕ.***

***Хорнуйĕнчи Серафима Филимоновнăпа Юрий Кузьмич Ванюшкинсем (сăн ӳкерчĕкре Олег мăнукĕпе) – шăпах маларах хак панă ĕçченсенчен пĕрисем.***

***– Çынсем ĕçленипе интересленсе пыл хурчĕсене килти хушма хуçалăхра 1970 çулта вырăн патăмăр. Малтанхи вăхăтра интерес кăначчĕ пулсан, юлашки çулсенче çак ĕçри нумай вăрттăнлăхсене алла илнĕ хыççăн килти хушма хуçалăхри утарпа тĕллевлĕ ĕçлеме пуçларăмăр. Çапла вара паян вĕлле шутне те пĕлместпĕр, – сăпайлăн калăртать ĕçчен мăшăр.***

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Шăмăсем çирĕп пулччăр

Врач канашĕ

Остеопороз – шăмă çирĕплĕхĕ чакнипе тата вăл хуçăлас хăрушлăх пысăк пулинпе çыхăннă чир. Пĕтĕм тĕнчери сывлăх сыхлав организацийĕ палăртнă тăрăх çак чир анлă сарăлнисен шутĕнче – юн тымарĕсен, шыçă чирĕсем, сахăр диабечĕ хыççăн тĕнчере тăваттăмĕш вырăн йышăнать. Тĕнчери кашни виççĕмĕш хĕрарăм тата кашни саккăрмĕш арçын çак чирпе аптăрать. Юлашки çулсенче Раççейре те çак чир сарăлсах пырать. Экспертсем каланă тăрăх çак чирпе пирĕн çĕр-шыври хĕрарăмсен 33 процентĕ тата арçынсен 24 процентĕ чирлет-мĕн.

Чир пуçланнă хыççăн чылай вăхăт палăрмасан та пултарать, нумай чухне ăна çурăм шăмми е пĕçĕ шăмми хуçăлнă хыççăн кăна диагноз лартма пулать. Шăмăсем патрак та хăвăрт хуçăлни остеопороз чирĕ аталанма пуçланнине пĕлтерет. Çакнашкал чухне шăмăсем йывăрах мар суранлансан та, сăмахран, çĕр çине ӳксен хуçăлаççĕ. Остеопороз чирĕ пулсан вара йывăр тиевсем йăтнă чухне, транспортра вăйлă силлесен çурăм шăммин сыпăкĕсем те хуçăлма пултараççĕ. Ытларах чух вара пĕçĕ шăмми хуçăлни тĕл пулать, уйрăмах хавшак сывлăхлă ватă çынсен.

Остеопороз чирĕ мĕнле сăлтавсене пула ытларах аталанма пултарать-ха? Çыннăн шăмăра минерал çирĕплĕхĕ пĕчĕк, эндокрин чирĕсем пур пулсан шăмă чирĕ те часах вăй илме пултарать. Палăртрăмăр ĕнтĕ, хĕрарăм организмĕ ку чире ытларах парăнать. Çывăх тăвансем хушшинче остеопорозпа чирлекенсем пурри те хăйĕн ырă мар витĕмне кӳрет. Остеопороз эпир хамăр мĕнле пурнăç йĕркине тытса пыраннинчен те килет. Çапла вара организмра кальци сахал пулни, D витамин çитменни те шăмăсен патраклăхĕ патне илсе çитерме пултарать. Çак чире аталанма пулăшакан факторсенчен теприн вăл – пирус туртнипе эрех ĕçни. Хускану сахал туни, пĕрмай ӳкни тата ытти факторсем те чире аталанма май параççĕ.

Çавăнпа та остеопороз чирне асăрхаттарас тесен кашни çыннăнах сывă пурнăç йĕркине пăхăнса пурăнмалла. Транспортпа çӳрессине, май пур пулсан, çуран утнипе ылмаштармалла. Хĕрарăмсен менструаци циклĕ епле пулнине асăрхасах тăмалла, çур çулта пĕрре гинеколог патĕнче тĕрĕсленмелле. Пурнăç тăршшĕпе ĕç хускану тăвассипе çыхăнман пулнă пулсан кайран хускану тăвасси çине уйрăмах пысăк тимлĕх уйăрмалла. Ĕç ӳтпĕвĕн активлă хусканăвĕпе çыхăннă пулсан вара лăпкăн уçăлса çӳрени, ташлани тата мышцăсене туртăнма май паракан хусканусем туни вырăнлă.

Кофе, эрех ĕçни, пирус туртни, апат ытлашши çини тата врач рецепчĕсĕр эмел тĕлсĕр ĕçни, уйрăмах антибиотиксем йышăнни, остеопороз патне илсе çитерет.

Организма кальци тата минерал веществосем яланах тата çителĕклĕ кирлĕ. Шăмă çирĕплĕхĕ мĕнле пуласси вĕсенчен килет. Çавăнпа та кальци тата D витамин пур продуктсем çимелле. Кусем вĕсем – сĕтрен хатĕрленĕ продуктсем, пулă, купăста, брокколи, мăйăр, укроп-петрушка тата ытти техĕмлĕ симĕс ӳсен-тăран. D витамин пулăра, пулă çăвĕнче, çăмарта сарринче пур. Çавăн пекех хĕвел пайăркисем те организма D витамин туса кăларма пулăшаççĕ.

Çыннăн остеопорозран çак йĕркепе асăрханмалла, медицина тĕлĕшĕнчи сиплеве вара врач палăртать.

**И. СОФРОНОВА,**
**терапевт врач.**

# Кĕнеке вулама кăмăллать

Пурнăçа кулленех çĕнĕлĕхсем кĕрсе пыраççĕ, эпир те çĕнĕлĕхсемпе тан утма тăрăшатпăр. Çамрăксем чылайăшĕ компьютерпа, Интернетпа тачă çыхăннă пулсан, аслă ăрури çынсем вара «чĕрĕ» кĕнеке алла илсе вулама тăрăшаççĕ.

Пирĕн Шашкар ялĕнче библиотека çук. Çана май ĕç ветеранĕсем, аслă ăрури çынсем пире, библиотекарьсене, килĕсене кĕнеке илсе çитерме ыйтаççĕ. Вĕсен йывăрлăхне ăнланса эпир вĕсем каланине пурнăçлатпăр. Вĕсем савăннине курсан вара ĕçлес кăмăл татах вăйланать.

Культура



Кĕнекене чунтан юратакансенчен пĕри – Велицат Федоровна Горшкова. Вăл 1940 çулта çуралнă. Мĕн ачаранпах Мăн Сĕнтĕрти совхозра фермăра вăй хунă. Чылай кĕнеке вулать пирĕн кинемей. Кĕçех унăн çуралнă кунĕ çитет. Ырă сывлăх, вăй-хăват сунас килет ăна. Пирĕн малашне те ун патне киле кĕнекепе, хаçат-журналпа çитмелле пултăрчĕ.

**И. ТАЙМАСКИНА,**
**Шатракасси ял библиотекин ертӳçи.**

Следстви комитетĕнчен

# Арçын суд умне тăрĕ

Следстви комитечĕ Çĕньял Шурчари 31 çулхи арçын тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕç тишкерессине вĕçленĕ. Вĕсен версийĕ çапла. Майăн 30-мĕшĕнче каçхине çак арçынпа пĕрле пурăнакан хĕрарăм килте пулман. 15 çулхи хĕр-тăванĕ вара хăнана килнĕ, арçын хĕр ача айванлăхĕпе тата уншăн меллĕ самантпа усă курнă.

Каярах пӳтсĕр ĕç пирки çӳлерех асăннă хĕрарăм пĕлнĕ. Çавна май вăл хăй тарăхăвне чараймасăр, арçынна тĕрлĕ сăмахпа хакланă. Лешĕ вара хĕрарăма питĕнчен икĕ хутчен çапнă. Пулăшăва полици сотрудникĕсене чĕнме тивнĕ. Инкек тӳснисем икĕ преступлени тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарма ыйтнă.

Халĕ çӳлерех асăннă преступленисемпе айăплав пĕтĕмлетĕвне вĕçленĕ ĕнтĕ, район судне тăратнă.

**Пичете следстви комитечĕн материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

Юбилей

# Саламлатпăр



Юратнă аннене, асаннене – Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Вера Павловна ШАРОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юбилей ячĕпе саламласа сана мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Вăрăм кун-çул, тулли телей, çирĕп сывлăх пултăр.

Хаклăран та хаклă аннемĕр! Эс пуришĕн савăнатпăр. Хамăра çав тери телейлĕ туятпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем, хăти-тăхлачисем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, асаннене, ырă кăмăллă кукамая, ват кукамая, çывăх тăвана – Турай ялĕнче пурăнакан **Лидия Ивановна СТЕПАНОВĂНА** 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр. Турри вăйхал парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр сана. Эсĕ пирĕншĕн – хĕвел çути, чун уççи. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, сана хисеплесе çĕре çити пуç таятпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕ, кинĕсем, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, тăванĕсем.**



Чи хаклă аннене, тараватлă хунямана, кукамая – Вăрманкасси ялĕнче пурăнакан **Валентина Михайловна ТРОФИМОВĂНА** 75 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр.Иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, Турри вăй-хал парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр.

**Саламлаканĕсем: 3 ывăлĕ, кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, 12 мăнукĕ, 5 кĕçĕн мăнукĕ, хăтисем, тăхлачисем, тăванĕсем.**



Юратнă мăшăра, аннене, мамака, хунямана, пирĕн çывăх çыннăмăра – Москакасси ялĕнче пурăнакан **Елена Федоровна СМИРНОВĂНА** 50 çулхи юбилейпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, утас çулу яланах такăр пултăр, ĕмĕрӳ вăрăм килтĕр. Пĕрпĕрне ăнланса пурăнма юратупа килĕшӳ, ĕмĕт-шухăшсене пурнăçа кĕртсе пыма вăй-хал сунатпăр. Çумра яланах шанчăклă çынсем, умра çутă та ырă кунсем пулччăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ачисемпе мăнукĕсем, кинĕсем.**

Редакци почтинчен

# Пирĕн вĕренекенсем – çĕнтерӳçĕсем



Атапай шкулĕнче вĕренекенсем вĕренӳре те, ытти конкурс-ăмăртусенче те хастар пулма тăрăшаççĕ.

Нумаях пулмасть 5–7 классенче вĕренекенсем Шупашкар хулине кайса килчĕç. Вĕсем Лакрей вăрманĕнче пулса курчĕç, пăр çинче конькипе ярăнчĕç.

Çав кунах Шупашкарта маунтинбайк енĕпе ăмăрту иртрĕ. Республика шайĕнчи ăмăртăва пирĕн шкулти вĕренекенсем те хутшăнчĕç. 6 класра вĕренекен Снежана Музыкова пĕрремĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕ.

Çав кунах Шупашкарта Мускав районне йĕркеленĕренпе 40 çул çитнине паллă турĕç. Республика кубокне çĕнсе илессишĕн велоспорт енĕпе иртнĕ ăмăртура пирĕн шкулти Никита Орлов пĕрремĕш вырăна тухрĕ.

Çĕнтерӳçĕсене ЧР физкультурăпа спорт министрĕ С. Мельников тата тĕп хулан Мускав район администрацийĕн пуçлăхĕ А. Петров саламларĕç.

Снежанăпа Никитăшăн эпир те питĕ савăнтăмăр. Иван Воробьев тренер патĕнче ăсталăха туптакан çамрăк спортсменсене малашне те ăнăçусем тума сĕнетпĕр.

**А. АТЛАСКИНА,**
**Атапай шкулĕнче 7 класра вĕренекен.**

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельных участков

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:271101:123, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Падаккасы, для установки временных сооружений (гаража), площадью 24 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1197, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1188, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:271101:126, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Падаккасы, для установки временных сооружений (погреба), площадью 33 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:271101:122, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Падаккасы, для установки временных сооружений (амбара), площадью 26 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:271101:121, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Падаккасы, для установки временных сооружений (гаража), площадью 119 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:271101:125, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Падаккасы, для установки временных сооружений (гаража), площадью 29 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

## Постановление

**Чувашская Республика**
**Моргаушский район**
**Глава Моргаушского сельского поселения**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**
**18.10.2013 г. № 8**
**село Моргауши**

**О проведении публичных слушаний по проекту решения муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка»**

В соответствии со статьей 28 закона Российской Федерации от 06.10.2003г. № 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации» и ст.14 Устава Моргаушского сельского поселения Моргаушского района постановляю:

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка» с кадастровым номером 21:17:160303:37 28 октября 2013 года в 18 часов 00 минут по адресу: Чувашская Республика Моргаушский район, с. Моргауши, улица Мира, д. 5 а.

2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Глава Моргаушского сельского поселения С.Н. ЕРМОЛАЕВ.**

**Проект муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка»**

Руководствуясь п. 10 ст. 3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учётом результатов публичных слушаний администрации района постановляет:

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:160303:37 из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Республика Чувашия, район Моргаушский, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, улица Мира 5а, с разрешенного использования «для размещения временного торгового павильона» общей площадью 109 кв.м. на вид разрешенного использования «для капитального строительства и эксплуатации торгового помещения».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Моргаушского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 28.10.2013 года до 15-00 часов.

**Глава Моргаушского сельского поселения С.Н. ЕРМОЛАЕВ.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**С 9 октября открылся шинный центр «ШИН СЕРВИС». Большой выбор шин, дисков, аккумуляторов и т. д., при покупке комплекта шин – монтаж бесплатно. Каждому клиенту при замене шин – подарок. Адрес: с. Моргауши,территория «Агропромснаба». Тел.: 8(962)598-65-48. 5-10.**




**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 1-10.**

**Сумалли качака сутатпăр. Тел.: 8-919-662-95-22.**

**ЖАЛЮЗИ НА ОКНА ВСЕХ ВИДОВ от производителя. Прием заказов по адресу: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 16а. Тел.: 8-937-955-33-00.** 2-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Тел.: 8-927-667-40-92.** 15-33.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 10-10.**

**Цифровое спутниковое телевидение ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 4-10.**

**Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 14-25.**

**Немецкие качественные пластиковые окна. Замер, доставка – бесплатно. СКИДКИ. Тел.: 8-927-844-78-11. 3-5.**







**Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 7-10.**

**МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ДВЕРИ от производителя. Прием заказов по адресу: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 16а. Тел.: 8-937-955-33-00.** 2-10.

**СКЛАД ДВЕРЕЙ: для отделки окон: сэндвич, отливы, подоконники внарезку. МЕБЕЛЬ НА ЗАКАЗ. ОКНА. Адрес: д. Москакасы, ул. Московская, д. 54 «Б», здание «Автобан 86», 2 этаж. Тел.: 8-903-358-47-03. 2-5.**

**МАТРАСЫ ВСЕХ ВИДОВ. Прием заказов по адресу: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 16а. Тел.: 8-937-955-33-00.** 2-10.

**Март уйăхĕнче иккĕмĕш хут пăруламалли ĕне сутатпăр. Тел.: 8-905-346-63-36. 1-2.**

* * *

**7 уйăхри ăратлă качака таки сутатăп. Тел.: 8-965-688-56-36. 1-2.**

* * *

**Продаем полиэтиленовые трубы диаметром от 20 до 1200 и фасонные изделия. Тел.: 8-927-860-43-22. 4-5.**

* * *

**Продаю автомашину ВАЗ-2106 1999 года выпуска, недорого. Тел.: 8-937-010-80-04.**

* * *

**Икĕ уйăхри хура-шурă икĕ вăкăр усрама сутатăп. Тел.: 8-906-131-60-25.**

* * *

**Бурение колодцев, технологических отверстий. Колодезные кольца. Тел.: 8-927-668-96-96. 5-10.**

* * *

**«Натяжные потолки 21» от производителя. Срок изготовления – 2 дня. Каждый 4-й потолок – в подарок. Кредит, рассрочка, замер – бесплатно. Тел.: 8-919-669-16-66. 5-10.**

* * *

**Февральте пĕрремĕш пăруламалли хура, хĕрлĕ, шурă тĕслĕ тынашка сутатăп. Вăрманкас Хачăк ялĕ. Тел.: 8-927-846-29-43, 8-927-868-10-63.**

* * *

**Заанински ăратлă качака таки сутатăп. Тел.: 64-7-47.**

* * *

**Продаются березовые дрова. Тел.: 8-903-065-58-68. 2-2.**

* * *

**Пропала собака породы ЗСЛ (лайка), окрас – рыжий, кобель, 4,5 года. Тел.: 8-906-387-21-32.**

* * *

**Март уйăхĕнче виççĕмĕш пăруламалли хура, хăмăр, шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Октябрь вĕçĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатпăр. Тел.: 8-902-661-20-74.**

* * *

**Куплю бычков на откорм. Живым весом до 300 кг. Тел.: 8-905-346-84-28 (Вязов). 1-2.**

* * *

**Сĕт лайăх паракан хĕрлĕ е хĕрлĕ-шурă тĕслĕ ĕне туянатăп. Тел.: 8-927-860-84-94.**

* * *

**Вăкăрсем, тынасем, пăрусем туянатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13. 2-2.**

* * *

**25 октября 2013 года на центральном рынке с. Моргауши ОАО «Плодопитомник» г. Лысково реализует саженцы плодово-ягодных и декоративных культур, роз, хвойников. Цены от производителя. Тел.: 8(83149)5-42-93.**

Шатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта математика учителĕнче ĕçлекен Л.В. Дашковăн ашшĕ

**Владимир Степанович**
**ДАШКОВ**

вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе, ял-йышпа тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

## Прогноз погоды

| | среда 23 октября | | | | четверг 24 октября | | | | пятница 25 октября | | | | суббота 26 октября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -3 | -1 | +2 | 0 | 0 | +1 | +4 | +4 | +5 | +5 | +7 | +8 | +8 | +7 | +8 | +6 |
| Давление мм | 759 | 761 | 761 | 759 | 757 | 757 | 753 | 750 | 748 | 746 | 744 | 743 | 744 | 745 | 746 | 746 |
| Влажность % | 84 | 81 | 60 | 71 | 68 | 73 | 61 | 70 | 79 | 90 | 85 | 86 | 83 | 88 | 75 | 79 |
| Ветер м/сек | 2 | 1 | 2 | 4 | 5 | 5 | 6 | 7 | 6 | 5 | 5 | 6 | 5 | 4 | 5 | 4 |
| | С-З | С | З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | З | З | З | З |
| Солнце восход / заход | | 07:42 | 17:32 | | | 07:44 | 17:29 | | | 07:46 | 17:27 | | | 07:48 | 17:25 | |
| Луна восход / заход | | 20:07 | 12:16 | | | 21:01 | 13:01 | | | 22:01 | 13:38 | | | 23:06 | 14:07 | |

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 22.10.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4780.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.